25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942
СЕНТЯБРЬ
17
КĔÇНЕРНИКУН
217 (6152) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

Сентябрĕн 15-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Сентябрĕн 15-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа Сталинградран хĕвеланăçнерехре, кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата Моздок районĕнче çапăçнă. Ытти фронтсенче палăрă улшăнусемех пулман.

* * *

Сентябрĕн 14-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 10 танкĕпе бронемашинине, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 35 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, полевой тата зенитнăй артиллерин 6 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине 2 ротăна çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем оборонăра тăрса противникпа хĕрӳллĕн çапăçнă. Нимĕçсем хăйсен резервĕсене илсе пырса вĕсене çапăçăва кĕрте-кĕрте яраççĕ. Пĕр кун хушшинче пирĕн чаçсем противникăн пехотипе танкĕсен темиçе атакине сирсе янă. Халĕх пурăнакан пĕр пункт патĕнче пынă çапăçура Н-ски чаçăн боецĕсем нимĕçсен 3 танкне, бронемашинине, 5 орудине тата 350 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре хаяр çапăçусем пынă. Нимĕçсем, пирĕн позицисене атакăласа, пĕр участокра малалла куçма пултарнă. Пирĕн боецсем контратака тунă та хăйсен çухатнă позицийĕсене каялла тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче 7 танк тата противникăн 2 ротăна çити вилнĕ салтакĕсем выртса юлнă. Тепĕр участокра нимĕçсен 7 танкне тата 10 автомашинине персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Моздок районĕнче пирĕн войскăсем противникран халăх пурăнакан икĕ пункта тытса илнĕ. Н-ски чаçăн боецĕсем 8 танк тата 4 бронемашина пĕтерсе тăкнă, пĕр офицерпа 3 салтаклараса пыракан çăмăл автомашинăна тытса илнĕ. Кĕçĕн лейтенант Саладзе ертсе пыракан разведчиксем противник тăракан вырăна систермесĕр пырса кĕнĕ те, автоматсемпе персе, нимĕç пехотин 2 взводне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Воронежран кăнтăрарахра противник каллех пирĕн позицисене хаяррăн атакăланă. Пирĕн артиллерипе минометсем вăйлăн персе тăнипе тата пехотинецсем çапăçнипе гитлеровецсене каялла сирсе янă. Çав çапăçура нимĕçсен 7 танкне тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 1000 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче противник пехотăн пĕр полкне çити вăйпа тата 40 танкпа контратака тунă. Çав вăхăтрах красноармеец формине тăхăннă нимĕç салтакĕсем танксем çинчен анса юлса, пирĕн чаçсен тылне кĕрсе кайма хăтланнă. Пуçланса кайнă çапăçура пирĕн подразделенисем нимĕçсен 15 танкне тата 3 ротăна çити пехотине пĕтерсе тăкнă, противника каялла сирсе янă. Çапăçу çивĕчленсе кайнă самантра артиллери подразделенийĕн командирĕ Бернацкий капитан оруди патне тăнă та унпа тӳррĕн персе нимĕçсен 5 танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Противникăн тылĕнче кĕрешекен разведчиксен группи гитлеровецсен икĕ поездне ӳпĕнтерсе янă. 120 нимĕç салтакĕпе офицерĕ вилнĕ, паровоз тата вагонсемпе платформăсем нумай çĕмĕрĕлнĕ. Тепĕр районра противникăн боеприпассем турттарса пыракан поездне ӳпĕнтерсе янă.

* * *

Нимĕçсен 63-мĕш пехотнăй полкĕн 7-мĕш ротин 2-мĕш взводĕнчи Антон Ретмейер ефрейтор çумĕнче хăйĕн арăмĕ патне яма ĕлкĕреймен çырăвне тупнă. Унта ефрейтор нимĕçсем тытса илнĕ совет районĕсенче вăл мĕнле бандитла ĕçсем туни çинчен каласа парать: «Эпир ялсенче çимелли пур продуктсене те, çĕрулмине, ĕнесене туртса илетпĕр. Вырăнти çынсен нимĕн те юлмалла мар. Вĕсем выçă вилччĕр, вырăссене çапла туса кăна нимĕç çарĕ тăвакан çĕнĕ йĕркене вĕрентме пулать. Пирĕн çивĕч куç хамăра усă пулма пултаракан япалана пĕрне те курмасăр юлмасть. Вырăссем пиртен пытарса хăварма шутланă япаласене эпир пурне те çĕр айĕнчен чавса кăларатпăр...»

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Германин концлагерĕсене хупнă тыткăнри красноармеецсемпе мирлĕ совет гражданĕсене асаплантараççĕ, вĕлерсе пĕтереççĕ. Шверин çывăхĕнчи лагерьте гитлеровецсем пĕр уйăх хушшинче 216 пирлĕ красноармееца персе вĕлернĕ. Регенсбург районĕнчи тепĕр лагерьте пурăнакансем хушшинче тиф питĕ сарăлнă. Кĕске вăхăтрах унта нимĕçсем Киевран ирĕксĕрлесе илсе кайнă мирлĕ гражданссем 300 çынна яхăн вилнĕ.

Сентябрĕн 16-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳрен

Сентябрĕн 16-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противникпа Сталинградран хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, çавăн пекех Моздок районĕнче çапăçнă. Ытти фронтсенче палăрă улшăнусемех пулман.

* * *

Сталинградран хĕвеланăçнерехре хĕрӳллĕ çапăçусем пынă. Противник пĕр анчăр участокра пехотăпа танксем тата авиаци чылай пухса тăратса, темиçе хутчен хаяррăн атакăланă. Нимĕçсем, пысăк çухатусем тӳссе, пĕртак малалла куçма пултарнă. Пирĕн артиллерипе бронебойщиксем противникăн 6 танкне персе çĕмĕрнĕ. Пирĕн летчиксемпе зенитнăй артиллери пĕр талăк хушшинче нимĕçсен 35 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре Хĕрлĕ Çарăн Н-ски чаçĕ, противникăн атакисене сире-сире ярса, икĕ танк, темиçе оруди пĕтерсе тăкнă тата нимĕç пехотине пĕр батальона çити вĕлерсе пĕтернĕ. Тепĕр участокра Чаликин юлташ командир пулса тăракан чаçăн боецĕсем 200 гитлеровеца вĕлернĕ, нимĕçсен 5 танкне, 10 автомашинине тата артиллери батарейине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Моздок районĕнче пирĕн чаçсем противникăн атакине сирсе янă, нимĕçсен 6 танкне тата гитлеровецсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Совет летчикĕсем 4 танк тата противникăн войскăсемпе грузсем турттарса пыракан çĕр автомашинине çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Новороссийскран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тинĕс пехотин Востриков юлташ ертсе пыракан чаçĕсем виçĕ кун хушшинчи çапăçусенче противникăн пехотине пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра черноморецсем наступлени тунă гитлеровецсене пырса çапса каялла сирсе янă. Противник çапăçу хирĕнче 4 çĕмрĕк танк, 6 зенитнăй оруди, 10 автомашина тата çар грузĕсем тиенĕ 20 лав тăрахса хăварнă.

* * *

Кудрявцев юлташ командир пулса тăракан артиллери подразделенийĕ (Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕ) тăшманăн хирĕç тăмалли узелĕсем çине темиçе хутчен сасартăк вăйлăн персе тăнă. Снарядсем тӳрĕ лекнипе темиçе артиллери батарейине пĕтерсе тăкнă. Çав подразделенири снайперсем винтовкăсемпе персе пĕр кун хушшинче 78 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Аялараха хĕвеланăç фронтĕнче вилнĕ нимĕç офицерĕн записной кĕнекинчен кăшпĕр вырăнсене илсе пичетлетпĕр:

«Пирĕн дивизи аркатса тăкнă чаçсен юлашкийĕсенчен тăрать. Çак уйăхра ăна çĕнĕрен вăйлăн лăскарĕç. Пехота вырăс снайперĕсем пенипе пысăк çухатусем тӳсрĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ пире Верденра вырăс снайперĕсем çинчен лекцисем вуласа пачĕç.

Российăна хирĕç пыракан вăрçă мана авантюрăна астутарса тăрать... Господа - командующисем хăйсен вăйне ытларах хак панă. Çакăншăн эпир ĕнтĕ нумай тӳсрĕмĕр. Хĕл çывăхарса килет. Салтаксемпе офицерсем хĕлле вăйлăн каялла чакни çинчен часчасах калаçма пуçларĕç. Ун чухне çынсем питех те хăрушă япала тӳссе ирттерчĕç. Çавă аса килесрен вĕсем халĕ те хăтăлаймаҫха.

Çĕрле вырăссем пирĕн сулахайри флангa атакăларĕç. Атака умĕн артиллери вăйлăн персе тăчĕ. Пирĕн çухатусем пысăк. Манăн авалхи тус лейтенант Биттнер вилчĕ... Малашне савăнмалли мĕн те пулсан пуласси не кĕтместĕп эпĕ».

* * *

Смоленск облаçĕнче юлашки вăхăтра оккупантсенчен ирĕке кăларнă ялсенче гитлерла ирсĕрсем мирлĕ халăха тата тыткăна лекнĕ красноармеецсене тискеррĕн тытталанине кăтартакан çĕнĕ фактсем палăрса пыраççĕ. Тяговка ялĕнче нимĕçсем «Ленинская Искра» колхозăн председательне Прасковья Морозована хытă асаплантарчĕç те унтан персе вĕлерчĕç. Дубно ялĕнче фашистла бандитсем аманнă икĕ совет боецне нумайччен асаплантарнă та, унтан вара персе вĕлернĕ. Семеновское ялĕнчен чакса кайнă чухне гитлеровецсем тыткăна лекнĕ виçĕ красноармееца улăм пултарнă сарайне пăрахнă та çунтарса янă.

Ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлесе фронт умĕнчи тивĕçлĕхе пурнăçа кĕртер!

Комбайна кĕтсе тулла вырмасăр тăмалла мар

КУКЕÇ, сентябрĕн 14-мĕш. (Хамăр корр.). Шăнкас ялсоветĕнчи «Шăнкас» колхоз уйĕнче паянхипе виççĕмĕш кун ĕнтĕ тулă участокĕ хĕррипе комбайн ларать. Комбайн çĕмĕрĕлнĕ, ĕçлемест. Çапла пулсан та, кунта вырса пĕтермен 15 гектар тулла паян кун та алăпа вырма тытăнман. Хăçанччен вырмасăр лартмалла вара вăл тулла?

Колхоз председателĕ Матвеев юлташ çапла калать: «Комбайн ванса кайсанах эпир тулла алăпа вырма тухнăччĕ, анчах комбайнерсем — хамăрах выратпăр, алăпа выратăр пулсан, çапса памастпăр, терĕç те каялла кĕтĕмĕр»,—тет. Паллах, ку вăл тулла вăхăтра пуçтарса кĕртес ĕç чарăнса тăнин сăлтавĕ мар. Колхоз председателĕ тулла вырса пукас ĕçшĕн ирлĕ пек тăрăшманнине кăтартать ку тĕслĕх. Вăхăт кĕтмест, комбайн вырассине кĕтмесĕр 15 гектар çинчи тулла паянах пуçса илмелле. Ĕçе чарса тăраканссене тивĕçлĕ ответ тыттармалла.

Шупашкар районĕнчи çĕрĕç пайĕн заведующийĕ Васильев юлташ сентябрĕн 10-мĕш тĕлне Наркомзема панă сводкăра «район тырă вырса пĕтернĕ», тенĕ. «Шăнкас» колхозăн уйĕнче паян кун та 15 гектар тулă вырмасăр ларнине мĕнле сводкăпа шута илмелле пулать ĕнтĕ?

Н. Н.

Ĕçсене хăвăртлатмалла

ИЕПРЕÇ, сентябрĕн 14-мĕш. (Телефонпа). Иртнĕ çулта кĕрхи çĕртме туса хăварнă вырăнтан «Заря» колхоз кăçал кашни гектар çинчен 20 центнер тĕш тырă туса илнĕ. Çавăн пекех «Правда», «Большевик», «Коминтерн» колхозсем те вăйлă тырпул туса илчĕç.

Анчах та кăçал кĕрхи çĕртме тăвас ĕç районри колхозсенче начар пырать. Кĕрхи çĕртме тумалли графика районри колхозсем тултарса пымаççĕ. Августăн 30-мĕшпе сентябрĕн 10-мĕш хушшинче колхозсен 752 гектар кĕрхи çĕртме сухи тумалла пулнă пулсан, çак плана 10 процент çеç пурнăçланă. Кĕрхи çĕртме тăвас ĕçре МТС тракторĕсем те начар ĕçлеççĕ, 400 гектар сухалас вырăнне вĕсем тракторсемпе 79 гектар çеç сухаланă.

Чылай колхозсем кĕрхи çĕртме тăвас ĕç çине сиелтен пăхаççĕ. «Победа» колхоз кĕрхи çĕртме тума 10 кун кая юлса тухнă, малтанхи кун уя 12 плуг кăларнă, анчах вĕсемпе ик-виçĕ хут савăрăннă та, «çĕр хытă» тесе ĕçрен пăрахса кĕнĕ. Çавнашкалах «Правда» колхозра та кĕрхи çĕртме тăвас ĕç сителĕксĕр вырăнта. Кĕрхи çĕртме тума тухнăранпа ку колхоз пĕтĕмпе те 10 гектар кăна сухаланă. Ăна та машинно-тракторнăй станцин тракторĕсемпе сухаланă. Капла ĕçлеме юрамасть, ĕçсене хăвăртлатмалла.

Д. МИХАЙЛОВ.

Тăкаксемпе кĕрешмен çĕрте

ШĂМАРШĂ. «Сталь» колхозра тăккаланчăксене пуçтарас ĕçе организацилемен. Шутласа пăхнă тăрăх пĕр квадратлă метр çинче кунта 30 пучак ытла выртса юлать. Анчах та вĕсене пуçтарас тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ.

— Эсир пучахсене мĕншĕн пуçтармастăр, тесе ыйтсан, колхоз председателĕ «ĕç вăйĕ сахал», тет. Çавăн пекех «Кзыл-Юл», «Красный Вазан» колхозсенче те тăккаланчăксене пуçтармаççĕ.

П. КУЗЬМИН.

МАНĂН ÇИТĔНӲ

Çĕршыв ялхуçалăх работникĕсем умне кăçалхи вăйлă тырпула кĕске вăхăт хушшинче тата пысăк пахалăхпа пуçтарса кĕртес задача кăларса тăратрĕ. Çак задачăна пурнăçлас çĕрте комбайнсем чи пысăк вырăн йышăнаççĕ. Çакна эпир, комбайнерсем, лайăх ăнланса илтĕмĕр. Çавăнпа та хамăрăн пĕтĕм вăя вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек ĕçлес çĕре хутăмăр.

Кăçал эпĕ Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, сезонра 500 гектартан кая мар тырă вырма, 10 процент горючи перекетлеме обязательство илтĕм. Халĕ ĕнтĕ уççăнах калама пулать: эпĕ обязательсвăна пурнăçларăм, ку тарана çитсе 500 гектар тырă выртăм, 300 килограмм горючи перекетлерĕм.

Çак çитĕнӳсене эпĕ мĕнле майпа турăм-ха? Чи малтанах эпĕ комбайна лайăх ремонтларăм, ăна пĕр чарăнусăр ĕçлеттертĕм, ир-ирех пуçласа сĕм тĕттĕмччен ĕçлерĕм. Çапла вара хăшпĕр кун 30-шар гектар та тырă выртăм.

Эпĕ халĕ тунă ĕçсем мана малашне татах та лайăх ĕçлеме вăй параççĕ.

И. МИХАЙЛОВ,
Çĕмĕрле МТС-ĕн комбайнерĕ

Кашни килограмм тырăшăн кĕрешни çук

ÇĔРПУ. Вăрçă вăхăтĕнче тырпула уйсенчен пĕр пĕрчĕ юлмиччен пухса кĕртмелле. Кашни килограмм тырă тăван çĕршывăн чыслăхĕпе никама пăхăнманлăхне сыхланă çĕре, вăрçă фрончĕсенче çĕнтерӳ тунă çĕре каймалла. Çĕрпӳ районĕнчи хăшпĕр колхоз руководителĕсем çакна халĕ те тивĕçлипе ăнланса илмен, тырпула тăккаламасăр пухса илессишĕн тăрăшса ĕçлемеççĕ.

«Большевик» колхоз уйри тырпулсене пухнă чухне питех те пысăк тăккаланчăксем тунă. Вăл тăккаланчăксем халĕ те пулса пыраççĕ. Пĕр тăваткал метр çĕр çинче тулла 3,3 килограмм, ыраша 400 грамм тăккаласа вырнă. Çапла колхозăн пĕтĕмпе вырса илнĕ çĕр лаптăкĕ 243 гектар пулсан, çав гектарсем çинче 607 пăт та 20 кĕрепенке тырă тăккаланса юлнă. Колхоз правленийĕ çакăнтан тивĕçлĕ вывод туман. Халĕ, авăн çапнă чухне те, тӳсме çук пысăк тăккаланчăксем тăваççĕ. Типтерсĕр çапнипе кашни 10 килограмм арпа çине 1235 грамм тырă юлать, çапла колхозăн паян кунччен çапнă ыраш шутĕнчен 1242 пăчĕ тăккаланса юлнă.

ВКП(б) Çĕрпӳ райкомĕпе райсовет исполкомĕ «Большевик» колхоз правленине кун пирки асăрхаттарнă, çапах та колхоз правленийĕ тăккаланчăксене пĕтерес тĕлĕшпе паян кун та ĕçре улшăну туман. Нумай тырă хăварса çапнă кĕлтесене тепĕр хут çапас ĕçе организацилемен.

«Красный Октябрь», «Этна» колхозсенче те пысăк тăккаланчăксем тăваççĕ. Кунта кашни кĕлтере 133 грамм тырă хăварнă. «Этна» колхозра вăтам шутпа кашни кĕлтере 138 грамм, 4 килограмм арпа пуçне 536 грамм тырă хăварнă. «Новая жизнь» колхозра комбайнпа вырса çапнă 2,009 гектар çинче кашни гектар пуçне 4 центнер тырă тăкăнса юлнă.

Тырра тăккаласа вырнăшăн, ĕçе лайăхлатма тăрăшманшăн «Большевик» колхоз председательне ĕçрен кăларнă, «Этна» колхоз председательне Галкина, комбайн агрегачĕн бригадирне Мясцова колхоз тыррине тăккаласа хăварнăшăн суда панă.

М. ЯКОВЛЕВ.

Авăн çапмалли графика пурнăçласа пымалла

КУКЕÇ. Машинно-тракторнăй станци авăн çапмалли графика тултарса пыраймасть. Сентябрĕн 10-мĕшĕнче планпа 2130 тонна çапмалла пулнă пулсан, вăл 1157 тонна çеç çапнă. Уйрăмăнах МТС-ăн 5-мĕшпе 11-мĕш бригадисем начар ĕçлеççĕ. 5-мĕш бригада (машиновечĕ Столяров юлташ) 150 тонна вырăнне 27 тонна, 11-мĕш бригада (машиновечĕ Розовский юлташ) 150 тонна вырăнне 22 тонна çеç çапнă. Столяров юлташ ĕçлекен молотилка «Стрелка» колхозра сентябрĕн 2-мĕшĕнчен вара ĕçлемесĕр ларать. Малтанхи вăхăтра молотилка ĕçлеймен, халь тата молотилкине юсанă, тракторĕ пăсăлнă.

Нумай чухне молотилкăсем МТС айăпĕпе тăраççĕ. Пăсăлнă молотилкăсене юсама механиксем вăхăтра пулăшу памаççĕ. Пулăшу халь нихăçанхинчен ытла кирлĕ, мĕншĕн тесен машиноведсем чылайĕшĕсем çамрăк.

Хăшпĕр çĕрте молотилкăсем колхоз правленийĕсен айăпĕсемпе те ĕçлемесĕр лараççĕ. «Новый быт» колхозра кĕлте турттарса çитерейменпирки молотилка кашни сехетрех чарăна-чарăна тăрать.

МТС-ăн лайăх ĕçлекен бригадăсем те пур. 6-мĕш бригадăн молотилкипе ĕçлекен машиновед Степанов юлташ графика çирĕп пурнăçласа пырать. Вăл Шĕнерпуçĕнчи «Молния» колхозра авăн çапса пĕтерсе «Кормилец» колхоза куçнă. Ку бригадăри тепĕр машиновед Гордеев юлташ «XI лет Октября» колхозра авăн çапса пĕтерсе «Смычка» колхоза куçнă, вăл та графика çирĕп пурнăçласа пырать.

Т. ЛОГИНОВ.

Авăн çапас ĕçе вăйлатмалла

ВĂРМАР. Районри малта пыракан 6 колхоз авăн çапса пуçтарчĕç. Сентябрĕн 15-мĕш тĕлне районри колхозсем пурĕ 11.327 гектар çинчи тырра çапса пухнă. «Вутлан», Кивĕ Мăрат ялсоветĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозсем районра чи малтан авăн çапса пĕтерчĕç. «Хĕрлĕ Мăрат», «Арапуç», «Тугас», Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем пур йышши тырăсене те ыран -паянах çапса пухаççĕ.

«Хĕрлĕ Мăрат» колхозра икĕ молотилка. Вĕсенчен пĕри—двигательпе, тепри лаша вăйĕпе ĕçлеççĕ. Молотилкăсем авăна кăнтăрла та, çĕрле те пĕр чарăнусăр çапаççĕ. Çапнă тырра çийĕнчех сортласа пырассине те лайăх организациленĕ.

«Атнаш» колхозра та ултă лаша вăйĕпе ĕçлекен молотилкăпа кунĕн-çĕрĕн авăн çапаççĕ. Машиновед Малов юлташ талăк хушшинчи нормăна сăтăшах ирттерсе тултарать. Сменăра унăн 50 центнер тырă çапса кăлармалла пулсан, вăл 67-шер центнер ытла çапать.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн машиновечĕ Васильев юлташ авăн çапма пуçланăранпа пурĕ 300 тонна тырă çапса кăларнă. Авăн çапас ĕçе малалла татах та хăвăртлатмалла.

Г. ФЕДОРОВ,
Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Ĕçсене ăнăçлăн туса пыраççĕ

КАЛИНИНО, сентябрĕн 14-мĕш. (Телефонпа). Районри 13 колхоз—Юманайĕнчи «Коминтерн», Мăнъялти «Трактор», Мăчамăшри «Первомайски», Туваçкинăри Мичурин ячĕпе тăракан колхозсем т. ыт. те сентябрĕн 12-мĕшĕнче кĕлтесене капана хывса çитернĕ.

Ямбахтинăри «Партизан» колхозри В. Кумруков юлташ ертсе пыракан бригада кĕлтесене ытти бригадăсенчен малтан капана хыврĕ, 88 гектар тыррăн 75 процентне çапса пуçтарчĕ. Бригадăри Ф. Архипов, М. Горягин тата ытти колхозниксем хăйсен нормисене кунсеренех 150-шар процент тултарса ĕçлеççĕ.

Бригадăра ĕçе тĕрĕс организациленĕ май, колхозниксем колхозри пур ĕçсене те пĕр вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса пыраççĕ. Çавăн пек ĕçленине пула колхозниксем 5 гектар çинчи çĕрулмине кăларчĕç, ытти пахча-çимĕçсене те ăнăçлăн пуçтараççĕ.

Районра малта пыракан колхозсем государство умĕнчи парăмсене те татрĕç. Хурăн Кăкшăмри «Красноармеец» колхоз государствăна 111 центнер ытларах тырă, 68 центнер çĕрулми парса, хăйĕн обязательствине пурнăçларĕ, çакăнпа пĕрлех вăл Хĕрлĕ Çар фондне 36,76 центнер тырă хыврĕ.

Г. МАТВЕЕВ.

Учительсемпе вĕренекенсен примерлă ĕçĕ

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Районри учительсемпе вĕренекенсем уборкăн малтанхи кунĕсенче ĕçе активлăн хутшăнчĕç. Вĕсем чылайĕшĕ ĕç нормисене ытлашшипех ирттерсе тултараççĕ.

Мăн Улхашри вăтам шкулти учительсем Д. Андреев, А. Павлов, А. Павлова, Р. Торговник, Кириллова юлташсем ыраш вырнă çĕрте кашни кун нормăна 150 процент таран тултарса пычĕç. Сĕлĕ вырнă çĕрте те вĕсем малта пыраççĕ. Кунсăр пуçне, вĕсем колхозниксем хушшинче уйрăм темăсем тăрăх калаçусем ирттереççĕ, хаçат çинчи статьясене вуласа пара ççĕ.

Хутарти вăтам шкулти учительсенчен уйрăмах И. Яковлев, С. Федоров юлташсем колхоз ĕçне активлăн хутшăнаççĕ. Федоров юлташ ертсе пыракан шкул ачисен отрячĕ 4-мĕш бригадăра ĕçлесе тырă вырмалли мĕнпур лаптăкран виççĕмĕш пайне пуçтарса кĕртнĕ.

Анат Кăмашари, Егоркинăри туллимар вăтам шкулсенчи учительсем те уборка ĕçне начар мар хутшăннă. Егоркинăри шкулăн учительници Владимирова юлташ тырă вырнă çĕрте кашни кун нормăна 200—230 процент тултарать.

Учительсенчен шкул ачисем те юлмаççĕ. Мăн Улхашри вăтам шкулта вĕренекен Коннов 100 ĕçкунĕ ытла, çак шкулрах 6-мĕш класра вĕренекен Л. Коннова 70 ĕçкунĕ ытла тунă.

Пояндайкинăри туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем те чылайĕшĕ нормăсене ытлашшипех ирттерсе тултараççĕ, 1,5—2 ĕçкунĕ ĕçлесе илеççĕ. И. Кудров 91 ĕçкунĕ тума пултарнă.

Анчах уйрăм учительсем колхоз ĕçне сителĕксĕр хутшăнаççĕ-ха. Пренешри, Çĕмĕрлери туллимар вăтам шкулсенчи учительсем чылайĕшĕ уя та тухса курман. Савадеркинăри пуçламĕш шкулăн заведующийĕ Никитин юлташ тырă вырнă çĕре вăхăтран вăхăта çеç тухса курать.

Кашни учительпе вĕренекенĕн колхоз ĕçне активлăн хутшăнас пулать.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту

ВЦСПС-па ССР Союзĕн Аш-какайпа Сĕт-çу промышленноçĕн Халăх Комиссариатĕнче

Профессилĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕпе ССР Союзĕн Аш-какайпа Сĕт-çу промышленноçĕн Халăх Комиссариачĕ предприятисемпе хатĕрлев организацийĕсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн 1942 çулти август уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă.

ВЦСПС-па ССР Союзĕн Аш-какайпа Сĕт-çу промышленноçĕн Халăх Комиссариачĕ социализмлă ăмăртура хатĕрлев организацийĕсем хушшинче Вăрнарти райзаготконтора (управляющийĕ Червяков юлташ) çĕнтернине палăртнă, ăна виççĕмĕш преми пама йышăннă. Вăрнарти райзаготконтора выльăх хатĕрлесе парас тĕлĕшпе хăй çине илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртнĕ, государство планне ирттерсех тултарнă тата выльăхсене самăртас ĕçе лайăх туса пынă.

ВЦСПС-па ССР Союзĕн Çăмăл промышленность Халăх Комиссариатĕнче

Профессилĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕпе ССР Союзĕн Çăмăл промышленность Халăх Комиссариачĕ, Çăмăл промышленносри работниксен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1942 çулхи август уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Шупашкарти чăлха фабрики (директорĕ Богуславская юлташ, парторганизаци секретарĕ Каменецкий юлташ, фабком председателĕ Филина юлташ) августра лайăх ĕçленине палăртнă. Фабрика хăй çине илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртнĕ тата государство планне ирттерсе тултарнă.

--o--

Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса

Шупашкарти пир-авăр тĕртекен фабрикăри рабочисемпе инженерла-техникла работниксем, служащисем Октябрь уявĕ XXV çул тултарнă ятпа хăйсем çине социализмлă обязательствăсем илчĕç. Хăйсем çине илнĕ социализмлă обязательствисенче ытти малта пыракан заводсемпе фабрикăсем пекех çĕршывпа фронта продукци халиччен парса тăнинчен 35 процент ытларах пама пулаççĕ. Çакна пурнăçлама цехпа цех, рабочипе рабочи пĕр-пĕрин хушшинче социализмлă ăмăрту договорĕсем тунă.

ЛОГИНОВ.

Пысăк вылявсем тухнă

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Укçа-тенкĕпе япаласен пĕрремĕш лотерейин билечĕсем тăрăх Магаринăри «Борец» колхозри темиçе колхозникe пысăк вылявсем тухнă. Колхозница Евдокия Кадемейкина 5 пин тенкĕ, Василий Петрейкин 100 тенкĕ выляса илнĕ.

Çак кунсенче призывник Григорий Егоров комбинатри библиотекăна пырса хăйĕн билечĕсене тĕрĕслесе тухрĕ. Вăл та 5.000 тенкĕ тăракан каракуль пальто выляса илнĕ.

Государствăна çĕрулми парса татрĕç

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Сентябрĕн 16-мĕш тĕлне Итмар ялсоветĕнчи «Автобус» колхоз çĕрулмине йăлтах кăларса пуçтарса кĕчĕ. Государство умĕнчи çĕрулми обязательствине пĕтĕмĕшпех парса татрĕ. Çавăн пекех Янчелло ялсоветĕнчи «Победа», «Венера» колхозсем те государствăна çĕрулми парса татрĕç. «Победа» колхоз çĕрулмине колхозниксен обязательстви шучĕпе те парса татнă.

Р. ВАСИЛЬЕВА.

Н-ски чаçăн делегацийĕ Шупашкарта

Сентябрĕн 16-мĕшĕнче Н-ски чаçăн делегацийĕ главнăй инженер пулса Челноков юлташ ĕçлекен заводра пулчĕç. Унта вĕсем заводри рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен митингĕсенче тухса каланă, завод коллективне государство планне тултарассишĕн, фронт валли нумайрах продукци туса парассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме чĕннĕ.

Каçхине делегаци Шупашкарти журналистсемпе тĕл пулчĕ. Фронтовиксем вĕсен чаçĕ тăшмана хирĕç хастарлăн çапăçса пыни çинчен каласа пачĕç.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче



ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Хĕвеланăç фрончĕ). Укерчĕк çинче: Танксене пемелли орудисем боевой операцие тухса кайма хатĕр.

Д. ЧЕРНОВ фотоўкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Оккупантсен Кубань çинчи çаратăвĕсемпе ирсĕрлĕхĕсем

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, сентябрĕн 15-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Садсем ăшĕнчи Северская станица анлăн сарăлса выртнă. Станица йĕри-тавра—вĕçĕ-хĕррисĕр тулă пуссисем. Колхозниксем çак кĕркунне пуян тырпул кĕтнĕ. Анчах нимĕçсем килсе кĕнĕ те шурă çуртсем çунма тытăннă. Станицăра йынăшнă тата макăрнă сасăсем илтĕнсе кайнă. Оккупантсем хăйсен ĕçне выльăхсемпе тырпула туртса илессинчен пуçланă. Григорий Ткаченко казакăн картишне темиçе гитлеровец çĕмĕрсе кĕнĕ те витерен ĕнесемпе сыснасене хăваласа тухма тытăннă. Ватă колхозник хирĕç тăнă. Вара вăрă-хурахсенчен пĕри ун çине автоматран пĕр черет кăларса янă. Старик юн юхтарса çĕрĕ тĕшĕрĕлсе аннă. Фашистла ирсĕрсем Трофим Григорьевич Коломиец казакпа ытти вунă колхознике те çавăн пекех вĕлернĕ. Вĕсен мĕнпур «айăпĕ» те хăйсен пурлăхĕсене хўтĕлени кăна пулнă.

Тыткăна лекнĕ нимĕç салтакĕ Лемке намăса пĕлмесĕр çапла каласа парать:

— Нимĕçсен командованийĕ апат-çимĕçсемпе выльăх-чĕрлĕхе пĕтĕмпех турта-турта илет. Салтаксем, килçуртсем тăрăх çўресе, хăйсене мĕн килĕшнĕ, çавсене пурне те иле-иле тухаççĕ. Хуласенчи салтаксем магазинсене çаратаççĕ. Çаратса пухнă япаласене Германие ăсатаççĕ. Салтаксем вырăс хĕрарăмĕсене пусмăрлани çинчен хăйсемех каласа панине эпĕ час-часах илтнĕ. Пĕр салтак хăй Ростов хулинче çамрăк хĕрарăма пусмăрласа, кайран ăна пăвса вĕлерни çинчен каласа пачĕ.

Çапла каласа парать гитлерла вăрăхурах.

Нумаях пулмасть пирĕн боецсем противника пĕр станицăран хĕссе кăларнă. Вырăнти çынсем боецсене фашистсен тискер кайăкла ĕçĕсем çинчен, вĕсем тыткăна лекнĕ аманнă красноармеецсене асаплантарни çинчен каласа панă. Кĕçĕн лейтенанта Филимонова нимĕçсем уйрăмах тискеррĕн асаплантарнă.

Фронт боеприпассем ытларах туянать

ВЛАДИМИР ИЛЬИЧ ЯЧĔПЕ ТĂРАКАН ЗАВОДРИ ОКТЯБРЬ УЯВĔ УМĔНХИ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТАВĂН ПĔРРЕМĔШ КУНĔ

Сентябрĕн 15-мĕшĕнче Владимир Ильич ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ 70-мĕш номерлĕ завод — Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва пуçарса яраканĕ—патриотла пысăк çĕкленўпе ĕçленĕ. Çав кун хушшинче продукци туса кăларассине тата ĕç тухăçлăхне чылай ўстернĕ.

Панов юлташ начальник пулса тăракан цех, организованно ĕçлесе, продукцие график тăрăх кăларса пынă. Енерхи кунăн иккĕмĕш çурринче вăл графикран ирттерсе продукци пама тытăннă. Çавна май сменăри задание 109 процент пурнăçа кĕртнĕ. Фронт малтанхи кунхинчен 7 процент ытларах боеприпассем илнĕ. Гудков мастерăн участокĕ отлично ĕçленĕ, вăл малтанхи кунхипе танлаштарсан, продукци туса кăларассине 3 процент ўстернĕ, наладчица Сорокина хăй ĕçлекен 14 станокпа пуринпе те задание 5 процент ирттерсе тултарнă. Станочниксем Шершенев, Каширский тата ытти нумайĕшĕсем нормăран ирттерсе продукци панă.

Ларин юлташ начальник пулса тăракан цехра Кораблина наладчицăн участокĕнче станоксем пĕр чарăнмасăр ĕçленĕ. Боеприпассем туса кăларасси кунта 5 процент ўснĕ. Лебедева фрезеровщица çав кун икĕ норма тултарнă, сентябрĕн 14-мĕшĕнчинчен 20 процент продукци ытларах панă. Макаров стахановец ĕç тухăçлăхне 15 процент ўстернĕ.

Заводри рационализаторсемпе изобретательсен çĕнĕ сĕнĕвĕсем горючие, сĕрмелли çусене, электроэнергие нумай перекетлесе хăварма май параççĕ. Термически цехра пĕр ответлă детале туса хатĕрленĕ çĕрте 4 хутчен термически обработка тăвас вырăнне, 2 хутчен тунипех детальсене лайăх майлаштарма тытăннă. Çакă вăл талăкне 7 тонна мазут перекетлесе хăварма май парать. Çавăн пекех якорьсем туптаса хатĕрленĕ çĕрте çу вырăнне шывпа усă курмалли приспособлени йĕркеленĕ. Çакна май, уйăхсерен 25-шер тонна çу перекетленсе юлать.

Орденлă заводăн коллективĕ, октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, хăйсем çине илнĕ обязательствăсене тултарассишĕн тата ирттерсе тултарассишĕн, фронта паракан пулăшăва татах та ытларах ўстерессишĕн малтанхи кунран пуçласах çине тăрса кĕрешет. (ТАСС)

Комсомолецсен стахановла ĕçĕ

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Комбинатри комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем çĕршыв умне хăрушлăх тухса тăнине аван пĕлсе тăраççĕ. Çавăнпа та вĕсем паян ĕнерхинчен, ыран паянхинчен лайăхрах ĕçлесе çĕршыв валли ытларах та ытларах продукци туса кăларас ĕмĕтпе пурăнаççĕ.

Цехсенче хĕрўллĕ ĕç пырать. Кашниех хастарлă ĕçе кўлĕннĕ.

Тăваттăмĕш номерлĕ цехра ĕçлекенсенчен чылайĕшĕсем—çамрăксем. Вĕсем иртнĕ çулсенче çеç парттăсем хушшинчен ларнă. Геннадий Васильев халĕ регулировщик пулса ĕçлет. Вăл 2—3 уйăх каярах çеç çак профессипе ĕçлеме тытăннă. Халь куллен нормăна 4 хут ирттерсе тултарать,- уйрăм кунсенче 5 норма çурă таран тăвать.

Геннадий Васильевран инçех мар монтажник Миша Кондратьев ĕçлет. Вăл та производство ĕçне 2—3 уйăх хушшинчех хăнăхса çитнĕ, юлашки вăхăтра 3-шер норма туса пырать. Кунсăр пуçне, вăл рабочисем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе туса пырать. Нумаях пулмасть ăна комсорга суйланă.

Ĕç тухăçлăхне ўстерсе пырас тĕлĕшпе пиллĕкмĕш цехра комсомолецсемпе çамрăксем малта пыраççĕ. Комсомолец Вася Краснощеков ертсе пыракан слесарьсен бригади август уйăхĕнчи задание 302 процент тултарнă. Токарьсем: Посадин юлташ иртнĕ уйăхра кашни кун нормăна 478 процент, Сазонов юлташ—336 процент, комсомолец-фрезеровщик Жучков юлташ—366 процент тултарса ĕçленĕ. Вĕсем ку уйăхра тата пысăкрах ўсĕмсем тăвассишĕн, ытларах та ытларах продукци туса кăларассишĕн мĕнпур вăя хурса ĕçлеççĕ. Вĕсен ĕçне рабочисем хаклаççĕ, ырлаççĕ, вĕсенчен пример илсе ĕçлеме тăрăшаççĕ.

Комсомолецсем ĕç тухăçлăхне ўстерес, технологи процесне лайăхлатас тĕлĕшпе те лайăх ĕçсем тăваççĕ. Комсомолец Ваня Прокопьев нумай пулмасть питех те усăллă рационализациллĕ сĕнў панă. Вăл сĕнў ĕç тухăçлăхне 2 хут ўстерме пулăшать. Халĕ вăл сĕнĕве пурнăçа кĕртме тытăннă.

Комсомолец Пантелеймонов шутласа кăларнă сĕнў пĕр йышши продукци туса кăларассине икĕ хут ытла ўстерме пулăшрĕ. Халĕ ытти рабочисем те унăн сĕнĕвĕ тăрăх ĕçлеççĕ, куллен çĕнĕ çитĕнўсем тăваççĕ.

Комбинатри комсомолецсен фронтовой бригади кашни уйăхрах плана 150 процентран кая мар тултарса ĕçлеме обязательство илнĕ. Бригада членĕсем халĕ çак обязательствăна ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Вĕсем хушшинче нормăна тултарманнисем пĕрре те çук, чылайĕшĕсем 2-шер норма тултараççĕ. Миша Волков август уйăхĕнче нормăна 202 процент, Ваня Киселев—177 процент, Костя Анисимов—148 процент тултарнă.

Комсомолецсем—ăмăрту организаторĕсем. Вĕсем ытти рабочисене хăйсен примерĕпе ĕçлеме вĕрентеççĕ. Ку тĕлĕшпе тăтăшах каласусем ирттереççĕ, стена хаçачĕсем кăлараççĕ, ăмăрту хăмисем организациленĕ.

Комбинат коллективĕ август уйăхĕнчи программăна 117,1 процент тултарнă. Комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем хăйсен умне çак уйăхра татах та ытларах çитĕнў тăвас задача лартрĕç.

Х. ЛИСИН.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли--ăшă тумтирсем

КУСЛАВККА. (Телефонпа). Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли тепĕр хут ăшă тумтирсем пухма тытăннăранпа районĕпе сурăх тирĕсем 370 пухăннă, вăл шутран 200 тирне тума панă та ĕнтĕ. Кунсăр пуçне, ытти выльăхсен тирĕсем 43, çăм 202 килограмм, мулахайсем—81, ваткă 6 килограмм пухса панă.

Ăшă тумтирсем пухассипе «Виççĕмĕш Интернационал» колхозри комиссин председателĕ Федорова юлташ тăрăшса ĕçлет. Иртнĕ эрнере унта çăм 10 килограмм, сурăх тирĕсем 23, çĕлĕк пĕрре тата ытти япаласем те пухса районри склада леçнĕ.

Калас пулать уйрăм пуçламĕш парторганизацисем çак ĕç çине сахал çавăрăнса пăхаççĕ-ха. Чапаев ячĕпе тăракан колхозри пуçламĕш парторганизацин секретарĕ Жигарев коммунистсемпе комсомолецсене тата ялти активистсене ăшă тумтирсем пухма, колхозниксем хушшинче ку тĕлĕшпе ăнлантарса пама хутшăнтарман. Çавăн пекех Киров ячĕпе тăракан колхозра ĕç начар пыни те кандидатсен группин парторгĕ Спиридонов юлташ çителĕклĕ ĕçлеменни çинчен калать.

Партипе комсомол организацийĕсен ăшă тумтирсем пухас ĕç çине ытларах çаврăнса пăхмалла, колхозсенче ку енĕпе ĕçлекен комиссисене пулăшса пырас пулать, вĕсен ĕçĕсне тĕрĕслесе тăмалла. Асра тытас пулать: ăшă тумтирсем пухас ĕçри ăнăçлăх ку ĕçе кашни кун ертсе пынинчен килет.

Н. ЛЬВОВ,
ВКП(б) Куславкка райкомĕн секретарĕ.

КОМСОМОЛЬСКОЕ. (Телефонпа). Юлашки вăхăтра Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕç районра вăйланчĕ. Июль уйăхĕнчен пуçласа сентябрĕн 10-мĕш тĕлне районĕпе 338 тир пухăнчĕ, вĕсенчен 284 тирне тума патăмăр. Кунсăр пуçне, ăшă тумтирсем хатĕрлеме 128 килограмм çăм пухăннă.

Çавăнпа пĕрлех районри ĕççыннисем совет воинĕсем валли çĕлетсе хатĕрленĕ тумтирсемпе япаласем параççĕ. Паянхи куна районĕпе 29 кĕрĕк пиншак, 54 мăшăр ăшă алса, 8 фуфайка, 6 мăшăр çăм носки, 13 çĕлĕк, сыхнă кĕпесем 10, портянкăсем 14 мăшăр, аялтан тăхăнмалли кĕпе-йĕм 33 мăшăр, минтер пичĕсем 13, алшăллисем 11 пухăннă.

Ăшă тумтирсем пухас ĕçе «Янга Турмыш» колхозра (комисси председателĕ Иштяков юлташ) лайăх организациленĕ. Унта 42 тир, 7 мăшăр портянка пухнă. Çак ĕç «Дубровка» колхозра та аван пулса пырать (комисси председателĕ Алякин юлташ). Ку колхозра 25 тир, 2 кĕрĕк пиншак, 6 çĕлĕк, 7 алшăлли, 3 мăшăр аялти кĕпе-йĕм пухса панă. Машинно-тракторнăй станцинче ĕçлекенсен бригадирĕсем кашниех пĕрер мăшăр çăмата хатĕрлеççĕ.

Çав вăхăтрах район центрĕнчи служащисем хушшинче ăшă тумтирсем пухас ĕç япăх пулса пырать. Сыхăну уйрăмĕ, Госбанк отделенийĕ, райфинотдел коллективĕсенче ăшă тумтирсемпе япаласем пухма паянччен те тытăнман-ха. Чайковский ячĕпе тăракан промысла артелĕнче те ăшă тумтирсем пухассипе ĕçлемеççĕ.

Ăшă тумтирсем пухас ĕçе хаклама-сăр тăни пулмалла мар. Предприятисенче, колхозсенче тата учреждениссенче ăшă тумтирсем пухас ĕçе анлăн сарас пулать.

В. АВВАКУМОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Ют çĕршывсенче

Совет Союзĕпе туслă пулнине палăртакан Балтиморти митинг

НЬЮ-ИОРК, сентябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 10-мĕшĕнче Балтиморта чаплă митинг пулса иртнĕ. Ăна «Совет Союзне вăрçăра пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен вырăнти комитет» организациленĕ.

Митингра пулнисем студентсен Вашингтонра пулнă пĕтĕм тĕнчери съезчĕн совет делегачĕсене Павличенко, Красавченко тата Пчелинцев юлташсене, Балтимора пынăскерсене, пысăк хавасăхпа саламланă.

Митингра иккĕмĕш фронта халех уçма ыйтса тухса каланă ораторсен сăмахĕсене пăвăллăн ала çупса кĕтсе илнĕ.

Италире экономикăллă йывăрлăхсем ўссе пыни

СТАМБУЛ, сентябрĕн 15-мĕш. (ТАСС). Италире продовольстви тĕлĕшĕнчи лару-тăру çаплах начарланса пырать. Итали çарĕн ўссе пыракан ыйтăвĕсене çырлахтарас тесе, фашистла правительсем халăха чи кирлĕ апат-çимĕçсемсĕр хăварса, выçă вилес шăпа умне тăратаççĕ. Июлĕн пуçламĕшĕнчех Итали правительстви çĕнĕ тулăпа ырашпа тата урапана конфискацилесси çинчен пĕлтернĕ. Хресченсем тырпула пытарса хăварнине хирĕç кĕрешес шутпа влаçсем тырпула пухса кĕртес, авăн çапас тата тырăсене авăртас ĕç мĕнле пынине çирĕппĕн контрольлесе тăраççĕ. Тырпула пытарса хăваракан хресченсене фашистла влаçсем хыттăн айăплаççĕ. Пичетре пĕлтернĕ тăрăх, тырпула пытарса хăварнăшăн пĕр август уйăхĕнче кăна темиçе çĕршер хресчене арестлесе çар судне панă. Час-часах пытарнă тырпулсене фашистла партин рядовой членĕсем пулса тăракан хресченсем патĕнче тупаççĕ. Çапла, сăмахран, «Стампа» хаçат Бергамора «государствăна тырă паманшăн» фашистла партирен 5 фашиста кăларни çинчен пĕлтернĕ.

Пухса илнĕ тырпул çарăн мĕнпур ыйтăвĕсене тата Германие тĕштырă тăратмалли обязательствăсене витме пултараймасть. Çавна пула реквизици тăвасси çинчен калакан законпа фашистла правительство кукурузăпа çĕрулмине туртса илнĕ çĕрте те усă курать.

Юлашки вăхăтра Италире апат-çимĕçсен нормине татах та ытларах чакарнă.

Топливо ыйтăвĕ Италире ниепле те татса пама çук проблема пулса тăрать. «Джорнале д'Италиа» хаçат çапла пĕлтернĕ: топливо çук пирки Италири шкулсенче кăçалхи çул хĕллехи каникулсем икĕ уйăха яхăн, декабрĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа февралĕн 15-мĕшне çитиччен, тăсăлаççĕ.

Испанири партизанла кĕрешў

НЬЮ-ИОРК, сентябрĕн 15-мĕш. (ТАСС). Испанири партизанла кĕрешў анлăнрах та анлăнрах сарăлса пырать. Астурире, Сантандер, Бискайя, Сан-Себастьян провинцийĕсенче, çавăн пекех тата Галисире, Çĕнĕ тата Кивĕ Кастильйăра, Естремадурăра, Каталонире партизансен отрячĕсем уйрăмах активлăн кĕрешеççĕ.

Гаванăра тухакан «Нотисиас де Ой» хаçат çапла çырать: юлашки вăхăтра Франко правительстви Германие ăсатма продовольствипе материалсем тиенĕ нумай поездсем çине партизансем пыра-пыра тапăнса пĕтерсе тăкнă. Нумаях пулмасть Франципе Испани чиккинче партизансен ушкăнĕ чугунçул составне тапăнса ăна çунтарса янă. Бискайски заливăн Испани аллинчи çыранĕнче, Сумайя хули патĕнче, партизансем чугунçула салатса пăрахнă тата чугунçул кĕперне юрăхсăра кăларнă. Вĕсем çак ĕçе Германие ăсатма таварсем тиенĕ поезд каясси çинчен пĕлсен тунă. Поезд шыва ўпĕннĕ. Басконири ытти темиçе пунктра та çак нашкал ĕçсемех пулса иртнĕ.

Фалангистсен Кубара тухакан «Монтанья» журналĕ ирĕксĕрех çапла йышăнать: 1939 çултан пуçласа Испанири партизанла кĕрешў пĕр минутлăха та лăпланман, вăл анлăнрах та анлăнрах сарăлса пынă. Партизанла движени мĕнпур Испанире сарăлса пырса Франко режимĕшĕн пысăк хăрушлăх пулса кайнине журнал уççăнах йышăнать.

Болгари патриочĕсен кĕрешĕвĕ

НЬЮ-ИОРК, сентябрĕн 14-мĕшĕ (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Болгари патриочĕсем Германин çар эшелонне ўпĕнтерсе янă тата Пловдив районĕнче телефон узелне çĕмĕрнĕ. Германие хирĕçле саботаж ўснипе гестапо унта хăйĕн агенчĕсен тепĕр отрядне янă. Килнĕ хыпарсем тăрăх, гестапо Болгари çарĕн темиçе полкне, вĕсем Совет Союзĕ майлă шухăшлăкăмăллă тесе айăпласа, салатса яма хушнă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ВИЛЬГЕЛЬМСХАФЕНА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 15-мĕш. (ТАСС). Англи авиаци министерствин коммюникинче çапла каланă: сентябрĕн 15-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем Вильгельмсхафена атакăланă. Бомбăсем пăрахнине пула хулара, уйрăмах доксен районĕнче, вăйлă пушарсем нумай тухни палăрнă.

МАДАГАСГАРТИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, сентябрĕн 14-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, англичансем Мадагаскар утравне шалалла кĕрсе пынă. Унăн çурçĕр пайĕнче Англин хĕвеланăç енчен куçса пыракан вăйĕсем Амбанлуна тытса илнĕ. Кăнтăрта, Амбоситрăна пыракан çул тăрăх, операцисем çавăн пекех ăнăçлăн пулса пыраççĕ.

ЛОНДОН, сентябрĕн 15-мĕш. (ТАСС). Англин çар министерстви Мадагаскарти вăрçă ĕçĕсем çинчен кăларнă коммюникере çакна кăтартса панă: Морандавăн кăнтăр-хĕвеланăç çыранĕ çине аннă войскăсем Мадагаскар утравĕ тăрăх малалла ăнăçлăн куçса пыраççĕ. Противник вырăнĕ-вырăнĕпе ытлашши вăйлăнах мар хирĕç тăрать.

ХРОНИКА

РСФСР Верховный Совет Президиумĕ С. Ф. Баусин юлташа, РСФСР Вырăнти топливо промышленноçĕн Халăх Комиссарĕн ĕçĕсенчен хăтарса, РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председатель заместителĕ вырăнне лартнă.

РСФСР Верховный Совет Президиумĕ Ф. Г. Ковалев юлташа РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председатель заместителĕ вырăнне лартнă.

РСФСР Верховный Совет Президиумĕ А. М. Прокопьев юлташа РСФСР Вырăнти топливо промышленноçĕн Халăх Комиссарĕ вырăнне лартнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чувашский Государственный Педагогический Институт НКП РСФСР в г. Мариинском Посаде

ОБЪЯВЛЯЕТ:

что согласно приказу ВКВШ при СНК СССР прием заявлений на I курсы факультетов физики и математики, чувашского и русского языка и литературы Пединститута и на I курс отделения истории Учительского института. а также на старшие курсы всех факультетов, продлен до 1 октября.

На I курс остальных факультетов прием производится в порядке конкурса.

Начало учебных занятий 1 октября. Явка студентов в институт обязательна в сроки, указанные в извещениях, рассылаемых по почте,

Неявившиеся без уважительных причин будут отчислены из института.

Заявления адресовать: г. Мариинский Посад, ЧАССР, директору.

СОВХОЗ „РОСГЛАВВИНО" (гор. Чебоксары, ул. Коммунальная Слобода, 21), имеет в продаже посадочный материал разных сортов—яблонь, смородину, малину. Отпуск производится всем гражданам.

9—1 Дирекция.

Пирĕн землякесем

Сывлăшри карапăн штурманĕ

Пĕчĕкренех вăл вĕренме юратнă, пурнине те интересленнĕ, пурне те пĕлессишĕн тăрăшнă. Вăл чăрсăр та хăюллă ача пулнă. Хăй тантăшĕсем хушшинче вăл çĕнĕ вăйăсене пуçараканĕ, вĕсен организаторĕ пулнă.

Вунçичĕ çулта вăл Сĕнтĕрвăрринчи çĕрĕçрелĕ техникумне вĕренме кĕнĕ. Вĕренме май килмен пирки вăл унтан тĕван ялне, вата ашшĕ патне таврăннă. Ялта ялсовет исполкомĕн секретарĕ пулса ĕçленĕ.

1935 çулхи кĕркунне, призыв комиссийĕнче Ефимов Александр Ефимович хăйне летчиксен шкулне яма ыйтать.

Анчах ăна летчиксен шкулне мар, Рязаньри çар училищине яраççĕ. Кунта хăюллă та харсăр çамрăк часах малтисен ретне тухать. Командовани те ăна пахлă тăвать. Училищĕрен вăл срокчен, çулталăк çурĕрах вĕренсе тухать те Хĕрлĕ Çар лейтенанчĕн званине илет. Унтан вăл пăртак вăхăт, иртсен, танкистсен курсне кĕрет, 3 уйăх хушшинче танк войскисен лейтенанчĕ пулса тăрать.

Анчах чĕринче вăл хăйĕн чи пысăк ĕмĕчĕпе — летчик пулса тĕван çĕршыв тўпинче ярăнас, тăван çĕршыва сывлăшран хўтĕлес ĕмĕтпе пурăнать. Летчиксен шкулĕсене йышлăн вĕренме илнĕ чухне вăл пурнинчен малтан унта кĕме çырăнать. Вăл çĕрĕн-кунĕн, ырми-канми вĕренме тытăнать. Кĕнеке хыççăн кĕнеке вулаca пухать, штурман ĕçне вĕренет. Часах практикăллă занятисем пуçланаççĕ. Вĕренў пулĕмĕ вырăнне самолет кабини. Кĕнекесем вырăнне тĕрлĕрен приборсем. Летчиксен шкулĕнчен вăл отлично вĕренсе тухать. Командовани ăна тав тăвать. Ефимов юлташа эскадрилья штурманĕ пулма уйăраççĕ.

Финляндипе вăрçнă чухне çамрăк штурман аслă Ленин хули патĕнче çапăçма каясшăн пулнă. Анчах вĕсен урăх пысăк задание пурнăçлама тивет.

Фашистла Германия тăван çĕршыв çине тапăннă кунран пуçласа Ефимов юлташ — фронтра. Вăл тăшмана хирĕç çапăçать, тискер кайăксене тавăрать: пирĕн хуласемпе ялсене çунтарса аркатнăшăн, совет çыннисен куççульĕпе юнĕшĕн, çамрăк ачасен телейне таптанăшăн тăшмана тавăрать. Пирвайхи кунран пуçласах, вăл хăйĕн боевой юлташĕсемпе — старши лейтенант Косыхинпа тата стрелок-радист Денисовпа пĕрле тăшмана хăватлăн пыра-пыра çапать, çĕршер бомбăсем пăрахса, унăн коммуникацийĕсене çĕмĕрет, чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтерсе-пĕтерсе тăкать.

Пĕррехинче, вĕсен экипажне пысăк задани параççĕ: чугунçул узелне аркатмалла, çапла вара тăшмана фронт патне чĕрĕ вăйпа боеприпассем турттарса пыма чармалла. Чавка пуçĕ пек лапкам-лапкам юр çăвать. Кун пек çанталăкра вĕçме кансĕр. Анчах летчик-капитан Косыхин аялтан вĕçсе, самолета цель патне çирĕппĕн илсе пырать. Фронт урлă каçсанах, аялта тăшман кавалерийĕн колоннийĕ курăнса каять. Штурман Ефимов темиçе бомба пăрахать, стрелоксем колонна çине пулеметран вăйлăн переççĕ. Çул чăсах лаша виллисемпе витĕнет, шурă юр нимĕçсен юнĕпе пĕвенет. Экипаж задание отлично пурнăçлать.

Çĕнĕ çул çывхарса килет. Шартлама сивĕ тăрать. Хĕрлĕ Çар хăватлăн пырать пырине çапăçăва чăтаймасăр тăшман хĕçпăшалĕсене пăрахса хăварсах тарать. Ăна йĕркеллĕн каялла чакма памалла мар. Тăшмана хупăрласа илсе пĕтерсе тăкмалла. Ефимовсен экипажне тăшман чакакан çулсене тата унăн эшелонĕсене çĕмĕрме задани параççĕ. Темиçе минута вĕçнĕ хыççăн разъездсенчен пĕринче, тăшман эшелонĕсем тăнине кураççĕ. Косыхин самолета разъезд еннелле тытать. Фашистсем самолет çинелле зенитнăй тупăран тата шултăра калибрлă пулеметсенчен переççĕ. Анчах пирĕн геройсене ку пĕрре те хăратмасть. Машина боевой курса çирĕп тытса пырать. Стрелоксем вагонсем çине пулеметсенчен пеме тытăнаççĕ. Пĕр темиçе минутăран тăшман эшелонĕ çинелле бомбăсем шăхăрса анаççĕ.

— Эшелона тўррĕмĕнех лексе çĕмĕрнĕ, чугунçул линийĕ çинче тăватă взрыв,—тесе пĕлтерет те стрелок-радист каллех пулеметран пеме тытăнать.

Тепринче разведка тăшман Н. пункчĕн районне пысăк вăйсем пухса тăратни çинчен пĕлтерет. Пирĕн командовани çав вăйсене фронт çывăхне çитиччĕнех аркатса, салатса тăкма вĕтам бомбардировщиксен пĕр звенине ярать. Çав звенора Ефимовсен экипажĕ те пулнă. Самолетсем пĕрин хыççăн тепри вĕçсе хăпарса фронт еннелле каяççĕ. Аякра Н. пункчĕ курăнать. Ун тавралăшĕнче çынсем хĕвĕшеççĕ, машинăсем калле-малле çўреççĕ. Самолетсем боевой курс çине тухаççĕ. Аялалла бомбăсем шăхăрса анаççĕ, тăхлапа тимĕр çăмăр пек çăвать. Аялта пысăк пушарсем тухаççĕ, взрыв пулнин сассисем илтĕнеççĕ. Фашистсем тавçăрса илсен, пирĕн самолетсем çине вăйлăн пеме тытăнаççĕ. Анчах сталинла соколсем хăрамаççĕ. Вĕсем аялтанах вĕçсе тăшман çине тупăсемпе пулеметсенчен переççĕ. Задание пурнăçланă. Тăшманăн пехотине 2 батальона яхăн, пĕр пысăк чаçăн штабне, 20 танка çити, 40 автомашина пĕтерсе тăкнă. Пирĕн самолетсем пурте хăйсен базине таврăннă.

Пирĕн самолетсен группи (вăл группăна Ефимов экипажĕ те кĕнĕ) бомбăсем пăрахса тата пулеметсемпе тупăсенчен персе нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 2000 çынна çити, 30 танка яхăн, войскăсемпе грузсем турттаракан 50 автомашинăна яхăн пĕтерсе тăкнă. Чугунçул çинчи кĕпере çĕмĕрнĕ. Чугунçул станцине аркатса тăкнă. Тăшманăн темиçе эшелонне сирпĕнтерсе янă.

Ефимовсен экипажĕ тăшман çине темиçе хутчен вĕçсе кайса бомбăсем пăрахнă, фашистла пиратсем хаяррăн тапăннине темиçе хутчен сирсе-сирсе янă. Çав çапăçусенче стрелок-радист старшина Денисов фашистсен «Мессершмитт-109» йышши виçĕ истребительне персе ўкернĕ. Экипаж тăшмана ăнăçлăн пĕтерсе пырать. Тĕрлĕ çўллĕшсенче вĕçсе çĕрле те, кăнтăрла та, сумăрлă-юрлă чухне те, вĕсем тăшмана хаяррăн пыра-пыра çапнă, заданисене яланах отлично пурнăçланă.

Тăван çĕршыв хăюллă соколсен ĕçне пысăк хак парса паллă тунă. Экипаж командирне капитан Кувшинова нумаях пулмасть Совет Союз Геройĕн званине панă. Стрелок-радист Денисова икĕ орденпа наградăланă. Пирĕн земляка, экипаж штурманне Ефимов Александр Ефимовича икĕ хутчен Хĕрлĕ Ялав орденĕ парса наградăланă. Халĕ вăл старши лейтенант, авиачасть штабĕнче ответлă ĕçре.

— Пирĕн экипаж тăшмана сахал мар аркатрĕ. Анчах ку çителĕксĕр. Фашистла ирсĕрсене пĕр çын юлмиччен пĕтерсе тăкмалла, çапла кĕрешме хушать пире тăван çĕршыв-аннемĕр,—тет чăваш халăхĕн паттăр ывăлĕ старши лейтенант Ефимов. Елчĕк районĕнчи «Октябрь» колхоз членĕсем хăйсен паттăр землякĕпе тивĕçлипе мухтанаççĕ. Мухтав та чыс хăюллă сталинла сокола!

Ив. ВАСИЛЬЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

Типографи № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 58 24 п. н.